ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

51 (4465) №, 2015, декабрь /раштав/, 17
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Мăн Этмен шкул ачисем ырă пуçару турĕç

## «Пурте «Тантăш» çырăнатпăр!»



Темшĕн-çке сайра-хутра та пулин эпир ачасене ытлашшипех ятлатпăр пек туйăнать. Асăрхаттармасăр пулмастех. Кирлĕ вăл. Ача «Ку ĕçе тумасть е аслисене пулăшмасть» имĕш пирĕн шутпа. Тата тĕрлĕ сăлтав тупатпăр...

Анчах яланах çапла мар иккен. Вĕсем пуçаруллă пулнинчен тĕлĕнсе те пĕтереймĕн чылай чухне! Шкулта пĕр-пĕр мероприяти йĕркелемелле е библиотекăра кĕнекесене юсама «мастерской» уçмалла – унта вĕсем пĕрремĕш. Е тата аслисене пулăшмаççĕ тенипе те килĕшмех çук. Ялти ватăсене пысăк ĕç туса панине курсан епле савăнмăн! Чылай ырă пуçарăвăн «хуçисем» – шкул ачисем.

Хальхинче пирĕн Хĕрлĕ Чутай районĕнче пулма тӳр килчĕ. Çак тăрăх ялананах маттурлăхпа палăрнинчен тĕлĕнсе те пĕтереймĕн. Çитес çулăн пĕрремĕш çур çулĕ валли хаçат-журнал çырăнмалли тапхăр кĕçех вĕçленет. Мăн Этмен шкулĕнче ку тĕлĕшпе лару-тăру мĕнле-ши? Валерий Иванович Ярабаев вĕрентекен пулса нумай çул ĕçлет. Вăл пĕлтернĕ тăрăх ачасем «Тантăш» хаçатпа «Тетте», «Самант» журналсене юратса çырăнаççĕ, вулаççĕ те. Çитес çула та вĕсемпе туслашас текен сахал мар пуасса шантарчĕ.

Улттăмĕш класс ачисемпе тĕл пулма вара питех те хавас пулчĕ. Редакци ĕçченĕсемпе курнăçнă хыççăн вĕренекенсем: «Пурте «Тантăш» хаçат çырăнатпăр!» – тесе çирĕп сăмах пачĕç. Апла пулсан асăнмалăх сăн ӳкерĕнме те кăмăллă. Пурте юратнă хаçата алла илсе асра юлмалли саманта сăнлама тăрăшрĕç. Маттурсем! Мăн Этмен шкул ачисем панă сăмаха çилпе вĕçтермессе питех те шанас килет! «Пирĕн ырă пуçарупа хавхаланса ытти шкулсенчи ачасем те çавăн пек хастар пуласса кĕтетпĕр», – терĕç вĕсем хăнасенчен уйрăлнă май.

***Владимир ФЕДОРОВ.***

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** ушкăнпа кар тăрса «Тантăш» çырăнма питех те хавас.

***Нина ЦАРЫГИНА сăнӳкерчĕкĕ.***

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Мăн Этмен шкулĕ.

ÇĔНĔ ХУМ

### «Тантăш» хаçатпа «Тетте», «Самант» тусĕсем!

2016 çулта Чăваш наци конгресĕ Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствипе пĕрле Ĕç çынни çулталăкне халалланă 8-11-мĕш классенче вĕренекенсен хушшинче çамрăк чăваш çыравçисемпе ӳнерçисен

**«ÇĔНĔ ХУМ» пултарăлăх ăмăртăвне тата «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ЧĂВАШЛĂХА АТАЛАНТАРАКАН ЧИ ЛАЙĂХ ШКУЛĔ» конкурс ирттерме хатĕрленет.**

Çак икĕ сумлă та пысăк ăмăртăва йĕркелесе ирттерме чăваш ачисен «Тантăш» хаçачĕ тата аслă классенче вĕренекенсемпе çамрăксен «Самант» журналĕ хутшăнать: конкурссен положенийĕсене, пĕтĕмлетĕвĕсене пичетлет.

«Чăваш Республикин чăвашлăха аталантаракан чи лайăх шкулĕ» ăмăртăвĕн пĕр вăрттăнлăхне пĕлтерĕпĕр. Унти хаклавра шкул, учитель «Тетте», «Самант» журналсем тата «Тантăш», «Хыпар» хаçатсем çырăннине шута илни пур. Енчен те пирĕн республикăри чăваш хаçат-журналне çырăнмасан чылайăшĕ конкурссем çинчен пĕлеймесĕр юлĕ.

***Геронтий НИКИФОРОВ,***
***Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ, конкурс йĕркелӳçи.***

**Хисеплĕ учительсем, шкул ачисем!**
**«Тантăш», «Хыпар» хаçатсене, «Тетте», «Самант» журналсене декабрĕн 25-мĕшĕччен çитес çулта илсе тăма çырăнма васкăр!**

# «СĔВЕ АТĂЛА ЮХСА КĔРЕТ» роман – иртнĕ кун Çути хайлавĕ



***Сумлă чăваш çыравçи Куçма Турхан çуралнăранпа 100 çул çитнине чысласа «Сĕве Атăла юхса кĕрет» роман тăрăх авăн-чӳк уйăхĕсенче викторина ирттертĕмĕр.***

Çакнашкал литература ăмăртăвĕсем кирли куçкĕрет. Эпир Раççейре литература, Чăваш Енре К.В.Иванов çулталăкĕнче конкурс йĕркелесе кĕнекепе туслă пулнине çирĕплетрĕмĕр, ĕнентертĕмĕр. Шупашкар районĕнчи Тренккасси шкулĕн чăваш чĕлхи учителĕ Ираида Фомина çырăвĕ те çирĕплетет çакна: «Сĕве Атăла юхса кĕрет» роман тăрăх викторина йĕркелекенсене эпĕ чунтанах тав тăватăп! Унăн ыйтăвĕсене хуравлас тĕллевпе Куçма Турханăн романне çине тăрса тĕплĕн вуласа тухрăм. Куç умне XVI ĕмĕрти мăн-мăн асаттесен пурнăçĕ яр уççăн тухса тăчĕ… Ыйтусене хуравланă чухне романа вулани çеç сахалрах пулнине туйрăм. Чăваш историкĕсен, литература тĕпчевçисен ĕçĕсемпе паллашрăм. Интернетра питĕ нумай материал шырамалла пулчĕ. Çакăн пек ĕçсем вулама, шухăшлама, хамăрăн иртнĕ пурнăç çинчен ытларах пĕлме хистеççĕ».

Литература викторинине пĕтĕмлетрĕмĕр. Ăмăртăва 60 çын ытла хутшăнчĕ. Вĕсен йышĕнче **вĕрентекенсем:** В.А. Фомина /Шупашкар, 29-мĕш шкул/, Т.А. Архипова /Çĕнĕ Шупашкар, 3-мĕш шкул/, Г.И. Тарасова /Хĕрлĕ Чутай районĕ, Шулю шкулĕ/, Н.Н. Афанасьева /Канаш районĕ, Ăвăспӳрт Кипеч шкулĕ/, Г.В. Дунаева /Канаш районĕ, Карăклă шкулĕ/, Л.А. Николаева /Сĕнтĕрвăрри районĕ, Шуршăл шкулĕ/, Н.В. Тямакова /Шупашкар, 29-мĕш шкул/, Н.И. Павлова /Патăрьел районĕ, Нăрваш Шăхаль шкулĕ/, И.В. Власова /Шупашкар, 47-мĕш шкул/, А.Г. Петрова /Шупашкар, 47-мĕш шкул/, Р.А. Гаврилова /Шупашкар, 40-мĕш шкул/, С.В. Тяхмусова /Шупашкар, 43-мĕш шкул/, Л.В. Ишмуратова /Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул/, Т.Ю. Ермолаева /Комсомольски районĕ, Аслă Чурачăк шкулĕ/, Н.И. Егорова /Шупашкар, 61-мĕш шкул/, В.С. Горбунова /Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул/, В.Н. Григорьева /Канаш районĕ, Вăтакас Татмăш шкулĕ/, М.И. Архипова /Шупашкар, 10-мĕш шкул/, С.П. Кулакова /Патăрьел районĕ, Ыхра Çырми шкулĕ/, З.В. Хромова /Çĕнĕ Шупашкар, кадет корпусĕн шкулĕ/, А.В. Егорова /Шупашкар, 10-мĕш шкул/, Л.А. Владимирова /Патăрьел районĕ, Ишлĕ Шетмĕ шкулĕ/, В.Г. Архипова /Етĕрне районĕ, Ирçе шкулĕ/, Н.М. Филиппова /Çĕнĕ Шупашкар, 4-мĕш шкул/, Н.Н. Иванова /Канаш районĕ, Карăклă шкулĕ/, Н.В. Петрова /Çĕнĕ Шупашкар, кадет корпусĕн шкулĕ/, Е.В. Анюрова /Патăрьел районĕ, Сăкăт шкулĕ/, И.Н. Белкова /Канаш районĕ, Хучел шкулĕ/, Л.В. Осипова, В.А. Самарина /Патăрьел районĕ, Турхан шкулĕ/, Р.В. Якуркина /Тăвай районĕ, Тĕмер шкулĕ/, А.В. Митрофанова /Шупашкар, 40-мĕш шкул/, Л.В. Данилова /Улатăр районĕ, Çĕнĕ Эйпеç шкулĕ/, К.Н. Михайлова /Шупашкар, 2-мĕш лицей/, О.Р. Ильина /Çĕнĕ Шупашкар, 2-мĕш шкул/, Н.М. Николаева /Шупашкар, 40-мĕш шкул/, И.А. Фомина /Шупашкар районĕ, Тренккасси шкулĕ/, С.В. Петрушкина /Шупашкар, 14-мĕш кадет шкулĕ/, Н.Н. Миронова /Шупашкар, 7-мĕш ача садĕнче чăваш чĕлхи вĕрентекен/.

**Вĕренекенсем:** Диана Назарова /Шупашкар, 49-мĕш шкул/, Мария Петрова /Шупашкар, 49-мĕш шкул/, Андрей Иванов, Людмила Вениаминова /Етĕрне районĕ, Мăн Чураш шкулĕ/, Людмила Чебукова /Канаш районĕ, Сиккасси шкулĕ/, Виктория Иванова /Канаш районĕ, Ухман шкулĕ/, Анастасия Кузьмина /Етĕрне районĕ, Пушкăрт шкулĕ/, Алексей Митрофанов /Шупашкар, 40-мĕш шкул/, Диана Волкова /Элĕк районĕ, Ураскилт шкулĕ/, Лариса Ерманова /Шупашкар районĕ, Вăрман Çĕктер шкулĕ/, Мария Артемьева /Патăрьел районĕ, Ишлĕ Шетмĕ шкулĕ/, Алина Анюрова /Патăрьел районĕ, Сăкăт шкулĕ/, Егор Архипов /Етĕрне районĕ, Ирçе шкулĕ/, Мария Павлова /Шупашкар районĕ, Тренккасси шкулĕ/.

Конкурса библиотека ĕçченĕ З.М. Федорова /Муркаш районĕ, Отаркка/ тата декрет отпускĕнчи М.В. Петрова /Çĕрпӳ районĕ, Иккĕмĕш Вăрманкас Кĕçтемĕр, Наци радиовĕн корреспонденчĕ/ хутшăнчĕç. Конкурса хутшăнса хурав янă Э.Н. Сергеева, Г. Гулянова хăйсен адресĕсене палăртман.

«Сĕве Атăла юхса кĕрет» романа юратса вулакан хаклă туссем! Сире литература ăмăртăвне хутшăннăшăн тав тăватпăр, пурне те Хисеп хучĕпе чыслатпăр, çывхарса килекен Çĕнĕ çул ячĕпе ăшшăн саламлатпăр, 2016 çулта «Самант» журналпа, «Тантăш» хаçатпа тата кĕнекепе туслă пулма сывлăх, ăнăçу, телей, çирĕп вăй-хал сунатпăр.

Хисеп хучĕсемпе пĕчĕк парнесене «Самант» редакцине кĕрсе илмелле. **Пирĕн адрес:** Шупашкар хули, И. Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 6-мĕш хут.

АСАМЛĂХ

# «Çĕнĕ çул юмахĕ»



Шупашкарти 43-мĕш шкул Çĕнĕ çула кĕтме хатĕр. Алăкран кĕрсенех хăвна юмах тĕнчине лекнĕн туятăн. Пĕрремĕш хутри чӳречесем çинче юр айне пулнă чăрăшсемпе хырсене асăрхатăн. Пысăк тата пĕчĕк Юр кĕлеткесем хаваслăн кулнăн туйăнать. Хыр тураттисем çинче – Çĕнĕ çул теттисем. Юмахри сăнарсем – мулкач çурисем, Юр Пикепе Хĕл Мучи – Çĕнĕ çул елкине васкаççĕ. Гардероб чӳречисене чăрăш тураттисем çине шăнкăрав çакса хатĕрленĕ шултăра гирляндăпа илемлетнĕ, «Çĕнĕ çул ячĕпе!» тесе хитрен çырнă. Юр пĕрчисем çуртсемпе чăрăшсем çине илĕртӳллĕн ӳкеççĕ.

Иккĕмĕш хута хăпарсан хĕллехи юмах тĕнчине çакланатăн. Кунта сывлăш вăйĕ хуçаланать. Пур чӳрече çинче те Çĕнĕ çул теттисемлĕ тата шăнкăравсемлĕ чăрăш тураттисем сăнланнă. Юрланнă туратсем çинче уйăпсем тата кăсăясем лараççĕ. Пур çĕрте те çулталăк палли йĕрленет – упăте. Анчах вăл та тĕрлĕрен:



е пĕчĕк те чарусăрскер, е нумай пĕлме ăнтăлаканскер, е юлташлăха сăнлаканнисем. Çавăн пекех чӳречесем çинче иртсе каякан çулталăк паллине те курма пулать – хăйне евĕр кăсăклă такасемпе сурăхсем.

Шкулăн виççĕмĕш хутĕнче – Сурхури уявĕ. Пĕчĕк пирĕштисем уйăх çинче ярăнаççĕ, ытти пирĕштийĕсем музыка инструменчĕсемпе Раштав кĕвви калаççĕ. Ку хутра илемлĕ те çепĕç кĕвĕ янăрать. Кайăк хур çулĕ те курăнать: вăл ӳкекен çăлтăрсенчен тăрать.

Çак илеме ăсталас тесе 1-11 класс ачисемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕ хавхаланса та питĕ тăрăшса ĕçлерĕç. Халĕ çак юмах



тĕнчи кунта килсе куракана пурне те тыткăна илет.

***Людмила ПЕТРОВА, шкул директорĕ.***

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
ТИВĔÇĔСЕНЕ ПУРНĂÇЛАКАН
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 28-83-70
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1146 экз.

● ЗАКАЗ
№ 4862
Пичете раштав уйăхĕн 16-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# «Çĕнĕ ятсем уçатпăр»

## конкурс малалла пырать!

Чăваш Республикин Культура министерстви, Чăваш Республикинчи профессионал çыравçăсен пĕрлешĕвĕ тата Чăваш республикинчи ачасемпе çамрăксен библиотеки çамрăк çыравçăсен

**«Çĕнĕ ятсем уçатпăр»**

***конкурсне йĕркелет.***

Конкурс 2015 çулхи ака уйăхĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа 2016 çулхи ака уйăхĕн 25-мĕшĕччен пырать. Унта 15-30 çултисем хутшăнма пултараççĕ.

**Кокурс виçĕ номинаципе иртет:**

- Проза
- Поэзи
- Драматурги

Хайлавсем вырăсла та, чăвашла та пулма пултараççĕ. Калăпăшĕ 20 страницăран иртмелле мар. А4 форматпа вырăслине Times New Roman, чăвашлине Arial Cyr Chuv 12-мĕш шрифтпа пичетлемелле. Текстпа пĕрле хайлавăн электронлă вариантне те ярса памалла /CD-диск е флеш/. Алă вĕççĕн çырнине е литература альманахĕсенче, хайлавсен пуххинче типографи майĕпе пичетленнисене йышăнмаççĕ.

**Хатĕр ĕçсене ярса панă чухне хуплашка çине çакна çырса кăтартмалла:**

1/ Конкурс ятне:

«Çĕнĕ ятсем уçатпăр» /«Открываем новые имена»/

Çамрăк çыравçăсен конкурсĕ /Конкурс литературного творчества молодых авторов/

2/ Конкурс номинацине

3/ Хайлав е çырнисен пуххин ятне

4/ Автор хушаматне, ятне, ашшĕ ятне

Хуплашкан тепĕр енче /2-мĕш страницăра/ кăтартмалла:

– çыхăну уйрăмĕн индекснe, пурăннă вырăн адресне, телефон номерне, e-mail

– вĕренӳ е ĕç вырăнне, ĕçри телефона

– кĕске автобиографи

Хайлавпа пĕрле аворăн тĕрлĕ тĕспе ӳкернĕ сăнӳкерчĕкне /6х8/ ярса памалла.

Ĕçсене 2016 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕччен йышăнаççĕ, регистрацилеççĕ. Декабрь уйăхĕнче конкурс ĕçĕсене хаклаcа пĕтĕмлетӳ тăваççĕ. Конкурс пĕтĕмлетĕвне Чăваш Респбуликин ачасемпе çамрăксен библиотекин сайтĕнчĕ вуласа пĕлме май пулĕ. Унсăр пуçне, «Çамрăксен хаçачĕ», «Тантăш» хаçатсенче тата «Самант», «Тăван Атăл», «Лик» журналсенче пичетлесе кăлараççĕ. Çĕнтерӳçĕсене кашни номинаципе конкурс лауреачĕн дипломне, конкурса хутшăннă çамрăк çыравçăсемпе вĕсен ертӳçисене те Тав çырăвĕсемпе чыслаççĕ. /Дипломсемпе Тав çырăвĕсене электрон почтипе ярса параççĕ/. Чи лайăх хайлавсене «Çамрăксен хаçачĕ», «Тантăш» хаçатсенче тата «Самант», «Тăван Атăл», «Лик» журналсенче пичетлеме палăртнă.

**Ĕçсене çак адреспа йышăнаççĕ:**

428027, Шупашкар хули, И. Яковлев проспекчĕ, 8а çурт.

Чăваш Республикинчи ачасемпе çамрăксен библиотеки,

Таврапĕлӳпе наци литературин уйрăмĕ,

«Çĕнĕ ятсем уçатпăр» конкурса.

**Ыйтса пĕлмелли телефонсем:**

/8352/ 51-62-63, 52-37-22, 54-02-82.

***Эвелина МАЛЕЕВА,***
***Чăваш Республикин ачасемпе çамрăксен библиотекинчи таврапĕлӳпе наци литературин уйрăмĕн ертӳçи.***

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

# Манар мар тăван чĕлхемĕре



Çĕр пин сăмах çĕршывĕ – Чăваш Ен.
Çĕр пин тĕрри пур ун, çĕр пин юрри.
Çак пурлăха аша хывса эс тĕреклен.
Мĕнле телей – тăван чĕлхе пурри.

Чăвашсем пин çул каяллах хăйсен чĕлхипе калаçнă, ăна ламран лама, сыпăкран сыпăка халалласа пынă, упрама тăрăшнă. «Халăха чи малтан унăн чĕлхи тытса тăрать. Чĕлхе пĕтмесĕр халăх та пĕтмест», – тесе шутланă вĕсем. Çак шухăш тăван халăх юрринче те палăрса юлнă. «Эпирех те вилсен мĕн юлать? Мĕн калаçнă чĕлхе çав юлать», – тенĕ мăн асаттемĕрсем. Вĕсем юрланă та çав, пирĕн ăру, уйрăмах пирĕн хыççăнхисем хăю çитерĕç-ши çапларах ĕнерлеме? Чĕлхе ан çухалтăр тесен унпа калаçмалла-çке, ăна аталантармалла. Паян мĕн куратпăр-ха? Хулара кăна мар, ялсенче те ачасем вырăсланса пыраççĕ. Чăваш çемйисенче ӳсекен шăпăрлансемех тăван чĕлхепе калаçмаççĕ. Акă хамăр шкулти кĕçĕннисен ушкăнне çӳрекен 20 ытла ачаран улттăшĕ пачах чăвашла пуплемест, хăшĕ-пĕри тăван чĕлхерен ютшăнни сисĕнет – вĕсем вырăсла калаçасшăн. Паллах ку пулăмшăн ашшĕ-амăшне «тав сăмахĕ» каламалла ĕнтĕ. Пепкисем ытлашши ăслă пуласран хăраççĕ-тĕр. Мĕн чухлĕ ытларах чĕлхе пĕлетĕн, этемĕн ăс-тăнĕ те, тавракурăмĕ те, калаçас-хутшăнас ăсталăхĕ те çавăн чухлĕ пысăкраххине тавçăрайманни питех те тĕлĕнтерет. Тĕнчери пур паллă çын та нумай чĕлхе пĕлни çинчен илтмен пулас вĕсем. Пирĕн республикăра тутарсем чылайăн пурăнаççĕ. Тĕлĕнмелле те, вĕсен ачисем хăйсен чĕлхине кăна мар, чăвашла та тăрăшсах вĕренеççĕ иккен.

Чăвашăн мĕскĕнленсе хăйĕнчен хăй вăтанма нимĕнле сăлтав та çук. Чăваш чĕлхи ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Вăл авалхи чĕлхе. Пуян та илемлĕ, çепĕç те сăнарлă. Чĕлхери хăш-пĕр пĕлтерĕшсене ăнланайманнин айăпĕ вара хамăртах. Вĕренес теместпĕр-çке-ха, ӳстерме те тăрăшмастпăр пĕлĕве. Чăвашла хаçат-журнал та, кĕнеке те вуламастпăр.

Тĕнчере пирĕн чĕлхерен илемлĕреххи те пур пулĕ. Вырăс чĕлхи те питĕ пуян. Çапах та аякрине курсах сывăхрине манар мар. Вăл вара – тăван халăх, атте-анне, тăван чĕлхе. Асатте-асаннемĕрсем пиллесе хăварнă чĕлхене манса ют халăха тухса намăс курас марччĕ. Ытти наци çыннисем пире вырăсла лайăх пĕлнишĕн мар, хамăр тăван чĕлхене манса кайманшăн хаклĕç те, хисеплĕç те.

***Петр НИКИФОРОВ,***
***вĕрентекен.***

Тăвай районĕ,
Элпуç шкулĕ.

# Пур çĕре те ĕлкĕрет вĕрентекен

Библиотекарь, технологипе тăван ен культури предмечĕсене вĕрентекен, класс ертӳçи… Çак ĕçсене йăлтах Патăрьел районĕнчи Çĕньялти Г.Айхи ячĕллĕ шкулти Татьяна Ильинична Ершова пурнăçлать. Вăл тăватă çĕрте вăй хурать, нихăçан ывăннине кăтартмасть.

Хастар вĕрентекен малтан Çĕньял шкулĕнче хĕрачасене технологи предметне вĕрентнĕ, кайран Тăрмăш ача садĕнче вăй хунă. Ун хыççăн Татьяна Ильинична каялла Çĕньял шкулне таврăнать, ĕç урокне ертсе пырать, библиотекарьте ĕçлет. Часах ăна тăван ен культурине вĕрентме те шанаççĕ.

– Шкулсăр эпĕ хамăн пурнăçа курмастăп. Пĕр кун çеç унта пулмасан та ачасем патне пырас килет, вĕсемсĕр тунсăхлатăп, – тет вĕрентекен.

Ĕçченскер пушă вăхăта та усăллă иртерме тăрăшать. Алла çиппе йĕп, пусма тытса тумтир тавраш çĕлет, ăшă шарф, нуски, кил-тĕрĕшре усă курмалли япаласем çыхать, пӳрт ăш-чикне çĕнĕ те илемлĕ тĕрĕсемпе илемлетет.

***Юлия ВАСИЛЬЕВА.***

Патăрьел районĕ,
Çĕньял шкулĕ.

# Вĕрентекен сăмах илет

**ПĔР ШКУЛТАН ХЫПАРЛАÇÇĔ**




## Çывхарать Çĕнĕ çул, кĕтсе ил эс ăна!

Тата темиçе кун кăна юлчĕ пирĕнтен кашни чăтăмсăррăн кĕтекен Çĕнĕ çул уявĕ алăкран килсе шаккиччен. Хĕл Мучипе Юр Пике вăрăм çула тухнă та ĕнтĕ. Вĕсем кашни ача патне, кашни киле çитме васкаççĕ. Ăшă салампа хĕпĕртеттерме тăрăшаççĕ, пылак кучченеçпе сăйлаççĕ.

Çак уява аслисенчен ытларах ача-пăча кĕтет. Вĕренекенсем хăйсен шкулĕнчен чăн-чăн юмах тĕнчи тума тытăннă та ĕнтĕ. Чӳречесене тĕрлĕ эрешпе капăрлатнă. Илемлĕскерсем асамлă тĕнчене илĕртнĕнех туйăнаççĕ. Шкула кĕрер-ха. Куç умне тӳрех курав тухса тăрать. Тĕрлĕ чăрăш, Юр кĕлетке, Юр Пике, Хĕл Мучи выставки пурне те хăй патне йыхăрать. Симĕс чăрăшне мĕнле япаларан кăна туман! Тĕлĕнмелле интереслĕ пулса тухнă вĕсем. Аслă классене вĕренекенсем хăйсен тавçăрулăхĕпе курава пуянлатнă. Кĕçĕн классенчи ачасем мĕнпур ăсталăхĕн «арчине» уçса пама тăрăшни куçкĕретех: теттесене тĕрлĕрен тунă, курава питех те пуян хатĕрленĕ.

Çывхарать Çĕнĕ çул! Ăна кĕтсе илме кашниех хатĕрленет паян. Пирĕн шкул ачисем вара илемлĕ чăрăш тавра вĕренӳре çитĕнӳсем тунипе савăнса та йăл кулса ташлĕç те юрлĕç.

***Светлана ФЕДОТОВА,***
***вĕрентекен.***

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** тĕлĕнтермĕш курав.

## Тимлĕ-ши эпир?

Çулленех эпир шкулта тĕрлĕ ĕç йĕркелетпĕр. Халь «Тимлĕх» проектпа çанă тавăрсах тăрăшатпăр. Вăл ачасене ырă, сăпайлă, тимлĕ пулма, пĕр-пĕрне йывăр вăхăтра пулăшма вĕрентет.



Паян та ачасем тĕрлĕ акцие, конкурса хутшăнма тăрăшаççĕ.

Анчахрах улттăмĕш «б» класра вĕренекенсем «Ырă ту» тата «Шоколад çурчĕ» акцисене хутшăнса хулари реабилитаци центрĕнче пулчĕç. Вĕсем унта ачасене пылак парнесемпе савăнтарчĕç, асăнмалăх теттесем парнелерĕç. Çитсе килекен Çĕнĕ çулпа саламласан кашнин куçĕнче йăл кулă ялкăшрĕ. Центр ачисем мĕн тери савăннине пĕлесчĕ! Ырă тунишĕн, вĕсене манманнишĕн питех те хĕпĕртерĕç. Тав сăмахĕсем каларĕç. Татах та килсе çӳреме ырă сунчĕç.

***Людмила АГАФОНОВА,***
***вĕрентекен.***
Шупашкар, 24-мĕш шкул.

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** «Пирĕнтен – парне!», – теççĕ ачасем.

## «Асра тытасчĕ яланах!»

Çапла калаççĕ пирĕн шкул ачисем тăван халăха çутта кăларас ĕçе хăйĕн пурнăçне панă сын пирки.

Иван Яковлевич Яковлев пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕпе чăваш халăхĕшĕн чи сумлă çынсенчен пĕри пулса юлчĕ. Вăл алфавит йĕркеленĕ. Чăваш культурин аслашшĕ. Ăслăлăхпа, хуçалăх ыйтăвĕсемпе кĕнекесем кăларнă, статьясем пичетленĕ, шкулсем уçнă. Хресченсем валли вулав çурчĕсем уçни, мастерскойсем йĕркелени мĕн тери паха тата! Хăйĕн хваттерĕнче шкул уçать те унта вĕренекенсен йышĕ ӳссех пырать. Революцичченхи чăвашсен культура вучахĕнчен 1918 çул тĕлне кăна çĕр ытла учитель вĕренсе тухнă. «Чăваш шкулĕ пирĕншĕн хĕвел выранне пулса тăчĕ, хресчен куçне уçрĕ», – тенĕ чăвашсем çак шкул уçăлсассăн.

Халăха çутта кăларакан Иван Яковлевич Яковлев шкулĕнчен пултарулă çын сахал мар вĕренсе тухнă. Вĕсем пурте наци культуришĕн вăйне шеллемесĕр ĕçленĕ.

Эпир шкулта ачасемпе тăван халăхăмăршăн калама çук пысăк, хаклă, сумлă ĕçсем тунă паллă çынсем пирки час-часах калаçатпăр, вĕсем пирки куравсем йĕркелетпĕр. Çамрăк ăру пирĕн Улăпа ан мантăр тесе тăрăшатпăр.

***Ирина ОРЛОВА,***
***вĕрентекен.***

**ВЕТЕРАН**

## Берлина çитнĕ манăн атте



Манăн атте, Михаил Кузьмич Кузьмин, 1925 çулхи октябрь уйăхĕн 30-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнчи Кивĕ Тутайкасси ялĕнче çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухсан Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Çичĕпӳртпе Шĕнерпуç ялĕсенчи шкулсенче вĕреннĕ.

Вăрçă пуçлансан тепĕр çул вунултă çулти çамрăксене Куславкка хулине платник ĕçне вĕренме ФЗО-на илсе кайнă. Çав çулхинех атте Свердловск облаçĕнчи Алапаевск хулинчи металлурги заводĕнче столяр пулса ĕçлеме пуçланă. Унта вĕсен самолет çуначĕсене тума тивнĕ. Училищĕре вĕренме пĕрре те çăмăл пулман. Тăханмалли те, апат-çимĕç те çитсе пыман. Пĕррехинче йĕпе çанталăкра тумтирĕсене вĕри кăмака çине хурса типĕтме тăнă та, анчах асăрхаса ĕлкĕреймен, япалисем çунса та кайнă. Урамра çӳреме те тумтир юлман. Атте пасара кайма пуçне тăла чĕркесе тухнă. Сĕт сутакан пĕр кинемие çакна асăрхать те хăй патне илсе каять, апатлантарать, кивĕрех çĕлĕк, фуфайка тупса парать…

1943 çулта вун çичĕ çулти каччăна Мускав облаçне радиста вĕренме яраççĕ. Кунта вăл аслă радиотелеграфист пулса тăрать те 1-мĕш Беларуç фронтне лекет. Вăрçă вăрçах çав. Темĕн те курма тивет кунта. Вилĕмпе хире-хирĕç пĕрре çеç мар тăнă. Мĕн Берлина çитиччен Тăван çĕршывшăн çапăçса тăшмана парăнтарма, Çĕнтерĕве çывхартма тăрăшнă. Аттен вăрçă чарăнсан та 1950 çулччен Германире хĕсметре тăма тивет.

Тăван яла таврăнсан çĕнĕрен хресчен ĕçне хăнăхма тивет. Пултарулă çамрăка вырăнта асăрхаççĕ те Чулхулана физвоспитани учителĕсене хатĕрлекен техникума вĕренме яраççĕ. Ун хыççăн Канашри ялхуçалăх училищинче, 1-мĕш шкулта учительте ĕçлет. Сывлăх çирĕпех пулманнине туять. Çавна пулах Канаш медицина училищине вĕренме кĕрет. Унта пĕлӳ илсе тухнă хыççăн Сĕнтĕрвăрри районĕнче /унччен Октябрьски районĕ пулнă/ тĕп больницăра вăй хурать. Çакăнтах вăл район çамрăкĕсемпе ĕçлекен комитета ертсе пырать, яшсемпе хĕрсене спортпа туслаштарма хăнăхтарать, кану каçĕсем йĕркелеме пулăшать. Атте вăй-халне пĕрре те шеллемест. Нумай-нумай ĕç тăвать, пуçарулăхĕпе палăрать. Çакăншăн ăна темиçе хутчен те Хисеп хучĕ панă, наградăсемпе хавхалантарнă.

Атте каярахпа Кăнарти больницăна ĕçлеме куçать. Кунта нумай-нумай çын сывлăхне тĕрĕслесе кун-çулне тăсма, ура çине тăма пулăшать. Эмелпе кăна мар, ырă та ăшă сăмахпа та сиплет вăл чирлисене. Çавăнпа та ăна Кăнар больницине таврари ялсенчен çӳрекенсем ырăпа кăна аса илеççĕ. Атте мĕн тивĕçлĕ канăва кайичченех çак больницăра ĕçлет. Çитмĕл виçĕ çулта вăл пурнăçран уйрăлать. Унăн ăшă кулли, ырă сăмахĕсем пирĕн асра ĕмĕрлĕхех упранса юлчĕç.

***Альбина ТИМОФЕЕВА,***
***вĕрентекен.***
Шупашкар,
28-мĕш шкул.

Тантăш 5
51 №, 2015, раштав, 17

# Çулталăкри чи мăнаçлă кун



Шупашкарти 47-мĕш шкулта кадет класĕсем йĕркелени – пирĕншĕн çĕнĕ ĕç. Ăна эпир пĕлтĕр çеç пуçларăмăр. Кăçал иккĕмĕш кадет класĕ те «пиççе» çитрĕ. Ачасене питĕ хавхалантарать вăл. Унта лекнине телей тесех йышăнаççĕ вĕренекенсем. Тĕлĕнмелле те, ашшĕ-амăшĕ те савăнать кăна мар – шутсăр хавхаланть, вĕсен те яваплăхĕ ӳсет.

Кадет пулма чӳкĕн 28-мĕшĕнче тупа турĕç. Ăна сумлăн ирттерме тăрăшрăмăр эпир. Пирĕн пата хăнана Шупашкар аэроклубĕн пуçлăхĕ, сывлăш-десант çарĕсен запасри полковникĕ В.Г. Антонов, «Синева» çар-десант клубĕн председателĕ, депутатсен Шупашкар хулин канашĕн депутачĕ О.В. Ялугин, депутатсен Шупашкар хулин канашĕн депутачĕ В.А. Родин, Чăваш халăх писателĕ, Шупашкар хулин хисеплĕ гражданинĕ Юхма Мишши, Зотик атте, хасаланисене тĕрĕслекен Федераллă службăри /УФСИН/ техника уйрăмĕн пуçлăхĕ С.В. Михайлов майор, сывлăш-десант çарĕсен ветеранĕ А.А. Тридворнов, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ, ЧНК президиумĕн членĕ, запасри аслă лейтенант Г.Л. Никифоров, Т.В. Дергучова çул хăрушсăрлăхĕн службин аслă инструкторĕ çитрĕç.

Пирĕн шкулти 5 «к» класс ачисемшĕн 2015 çулта чи асра юлнă кун – кадет пулма тупа туни. Çак мăнаç мероприятире хăйсем мĕн туйнине те çырса пачĕç вĕсем. «Тантăш» пулăшнипе республикăри тусĕсене те пĕлтерер вĕсен туйăмĕсене.

**Максим Ларионов, кадетсен командирĕ:**

– Кадет пулма тупа тунă кун пирĕнтен кашниех хумханчĕ. Виçĕ уйăха яхăн хатĕрленнĕ пулин те чăн-чăн яваплăха офицерсем умне тухса тăрсан тин туйса илтĕмĕр. Атте-анне пирĕн çине пăхса савăнчĕ. Вĕсен чунĕнче те хăпартлану туйăмĕ вылярĕ.

Тупа тунă хыççăн уяв малалла тăсăлчĕ. Уçă сывлăша, кӳлĕ хĕрринчи «Заимка» кану çуртне кайрăмăр эпир. Мана унта питĕ килĕшрĕ. Футболла, мечĕк пемелле, парне шыраса тупмалла вылярăмăр. Урхамахсемпе те паллашрăмăр.

Эпир – кадетсем. Пирĕн ыттисемшĕн яланах тĕслĕх пулмалла. Çавăнпа эпир тăрăшса вĕренетпĕр, пĕр-пĕрне яланах пулăшса пыратпăр. Пур йывăрлăхсене те çĕнтерет пирĕн туслă класс. Мĕншĕн тесен эпир пысăк саспаллирен пуçланакан Кадетсем. Хамăр класпа эпир тивĕçлипех мухтанатпăр.

**Андрей Прокопьев, класс старости:**

– Çав кун шкула кайнă чухнех сывлăшра уяв евĕрлĕхĕ сисĕнсе тăратчĕ. Пĕрле вĕренекенсем те урăхларах пек курăнатчĕç. Мăнаçлă кун паян – тупа тăватпăр. Унăн сăмахĕсем чĕрене пырса тивеççĕ. Строй умне тухса тупа тунă чух питĕ хумхантăм. Пирĕн патра хисеплĕ хăнасем те пулчĕç, вĕсенчен чылайăшĕ çар тумĕпе. Куç тулли тăракан офицерсене курсан хамăн та оборона министрĕ пулас килсе кайрĕ. Ăнланатăп: малашлăхра пысăк тĕллевсене пурнăçласси шкултан тытăнать. Тăрăшса вĕренмелле, дисциплинăллă пулмалла, паянхи çитĕнӳсемпе çеç çырлахмалла мар – шав малалла талпăнмалла.

**Эдуард Гаврилов:**

– Ахăртнех, çулталăкри чи юратнă кун малашне маншăн – ноябрĕн 28-мĕшĕ. Çав кун кадет пулма тупа турăмăр. Мĕнлерех хумхантăмăр эпир! Акă пурнăçри мăнаçлă самант пуçланчĕ – йĕркеленсе, строй уттипе зала кĕтĕмĕр. Унта вара мĕн чухлĕ халăх пуçтараннă. Пирĕн класс мĕнле хитре курăнса тăчĕ тата: пурте кăвак беретсем тăхăннă, шурă перчеткесемпе, аксельбантсемпе, пиçиххи тăххисем хĕвел пек çиçеççĕ. Мана та тупа тума черет çитрĕ. Эпĕ утса тухрăм, полковнике чыс патăм та тупа сăмахĕсене вулама пуçларăм. Тупа хыççăн строя таврăнма хушрĕç. Эпĕ чăн-чăн салтак пекех туйрăм хама, строй уттипе зала янраттарса пусса пытăм.

Кайран атте-аннесемпе пĕрле çутçанталăк ытамне кайни те питĕ килĕшрĕ. Кану çуртĕнче вăйăсем вылярăмăр. Лаша витинче те экскурсире пултăмăр. Тĕрлĕ ăратлă урхамахсене куртăмăр. Шашлăкпа хăналантăмăр, кукăльпе техĕмлĕ чей ĕçрĕмĕр. Вăхăт мĕнле иртсе кайрĕ, сисмерĕмĕр те – кун тĕттĕмленчĕ. Эпир киле пуçтарăнтăмăр.

**Влада Афанасьева:**

– Мĕнле мăнаçлă, савăнăçлă, янăравлă кун пулчĕ вăл! Эпир класĕпе кадет пулма тупа турăмăр. Малтан пурте питĕ хумхантăмăр, майĕпен лăплантăмăр. Тупа тунă хыççăн кашнине кадет карточкине тата кĕнекине тыттарчĕç. Ура! Эпир – кадетсен туслă çемйинче!

Кайран «Заимка» кану çуртĕнче хамăр класпа хаваслăн канма мĕнле лайăх пулчĕ – пĕлесчĕ сирĕн. Çавăн чухнехи пек тутлă шашлăкпа, улмаçырлапа халиччен хăналанса курман эпир. Çапларах иртрĕ пурнăçри чи мăнаçлă кун!

**Илья Пегасов:**

– Тинех çитрĕ эпир тахçантанпах кĕтнĕ кун. Шкула хисепелĕ хăнасем килчĕç. Атте-анне те кунтах. Сывлăшра уяв мăнаçĕ туйăнса тăрать. Тупа тунă ятпа хăнасем пире саламларĕç, парнесем пачĕç. Пачăшкă та пире пиллерĕ, кĕлĕ вуларĕ. Кайран вара эпир кану çуртне кайрăмăр. Унта та пурте килĕшрĕ

**Никита Чобан:**

– Тупа тумашкăн эпĕ питĕ хатĕрлентĕм. Пытармастăп: кадет класĕнче вĕренме тӳр килнĕшĕн мухтанатăп. Ахаль вĕренекен мар текех – эпĕ кадет. Унăн яваплăхĕ вара пысăк. Кадет ятне ӳкерме юрамасть, кашни ĕçе чунтан тăрăшса тумалла. Тăван çĕршыв пире юратать те шанать. Тупа тунă чухне савăнтăм та, мăнаçлантăм та, ытларах вара хумхантăм.

Тупа тунă хыççăн класĕпех, атте-аннепе пĕрле кантăмăр.

**Валерия Успенская:**

– Кадет пулма тупа тунă кун хамăр кăна мар, атте-анне те питĕ хумханчĕ. Пирĕн пата хăнасем те нумай килчĕç. Офицерсем те чылайччĕ. Чăваш халăх писателĕ Юхма Мишши пирĕн шкула хăйĕн кĕнекисене парнелерĕ.

Уява паллă тума «Заимка» кану çуртне кайни те «юмах» малалла тăсăлни вырăннех пулчĕ. Эпир каннă-вылянă хушăра атте-анне уяв сĕтелĕ хатĕрлерĕ. Кун пек тутлă апат çисе курман та темелле. Кайран вара тĕнчери чи хитре януарсем патне хăнана кайрăмăр – урхамахсемпе паллашрăмăр. Лашасене сахăрпа хăналама ирĕк пачĕç пире. Пирĕн савăк кăмăла урхамахсем те лайăх туйрĕç, мĕнле ăслă чĕрчунсем! Ун хыççăн каллех вăйăсем пуçланчĕç. Сисмерĕмĕр те киле кайма вăхăт çитрĕ.

**Андрей Алексеев:**

– Тупа тăвасси çавнашкал яваплă та хумханулла тесе шутламан та малтан. Пирĕн класс мăнаç маршĕпе зала утса кĕрсен хамăра тĕнче уçлăхне тухнă пекех туйрăмăр. Зал та темĕн пысăкăш курăнчĕ. Мĕн чухлĕ çын пуçтараннă! Çар тумĕ тăхăннă хăнасем речĕпе тăрса тухнă! Тупа тусан лăплантăм. Хăнасем саламлани кăна мар, аслăрах класра вĕренекен кадетсем вальс ташласа чыслани те кăмăла хускатрĕ. Тен, тепĕр çул хамăр та çĕнĕ кадетсене çапла хавхалантарăпăр?



Çак мăнаç куна паллă тума хула çывăхĕнчи кану çуртне кайни те асра юлчĕ. Атте-аннепе савăннă хыççăн географи вĕрентекенĕ пире тĕлĕнмелле вăйă сĕнчĕ – икĕ ушкăна пайланмалла та пытарса хунă мул-тупрана тупмалла. Сĕре хаклă пуянлăх шыраса тупрăмăр эпир: 1-мĕш ушкăна лимонад, 2-мĕш ушкăна минераллă шыв кĕленчисем лекрĕç. Çак ансат мул-тупра мĕн чухлĕ савăнăç илсе килчĕ, пирĕншĕн ылтăнран та хаклă пулчĕç вĕсем.

Аслисемпе футболла та вылярăмăр. Пĕрремĕш таймра пĕр команда, иккĕмĕшĕнче тепĕр ушкăн выляса илчĕ. Пĕтĕмĕшле вара – туслăх çĕнтерчĕ. Пирĕн класри пур ача та Çĕнĕ çулта та кану çуртне каяс кăмăллă.

Çакăн пек хакларĕç 5 «к» класра вĕренекенсем çулталăкра чи асра юлнă куна.

***Алевтина ФЕДОРОВА.***

Шупашкар,
47-мĕш шкул.

Салтак ячĕ йывăр ят.

# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Симĕс курăк

Кăпăшка юр айĕнче
Симĕс курăк тĕлĕрет.
Шурă юрăн хӳттинче
Ҫуркуннеччен вăй илет.
Хĕл хĕвелĕ майĕпен
Ăшшăн пăхать тӳперен:
«Симĕс курăк, ан васка,
Ҫуркуннеччен кăшт тăхта».

*Полина СТЕПАНОВА.*
Элĕк районĕ,
Вутлан шкулĕ.

## Хĕлле

Иртсе кайрĕ кĕрхи вăхăт,
Сисĕнмерĕ, питĕ хăвăрт.
Кулленех халь ҫĕр ҫине
Юр ҫăвать ҫине-ҫине.

*Олег ПАВЛОВ,*
*6-мĕш класс.*
Ҫĕрпӳ районĕ,
Опытнăй вăтам шкулĕ.



*Юра КУЗНЕЦОВ* (Канаш районĕ, Мăкăр шкулĕ) *ӳкерчĕкĕ.*

## Чăваш чĕлхи

Чăваш чĕлхи –
Тăван чĕлхе.
Унран пахи
Ҫук тĕнчере.

Чăваш чĕлхи –
Таса чĕлхе.
Унран хитри
Ҫук ҫĕр ҫинче.

Чăваш чĕлхи,
Ан сӳн нихҫан!
Кăвайт пек ҫун
Чунра ялан.

## Упрасчĕ аннене

Ман анне пек сăпайли
Ҫук пуль тĕнчере.
Илемли те кăмăлли
Курмăн ҫĕр ҫинче.

Хĕвел пек ман куҫ умне
Тухать ирхине.
Ҫемҫе, ăшă аллипе
Лăпкать хăй хĕрне.

Ирех тăрать ман анне,
Апат хатĕрлет.
Ҫитерет те пепкине,
Ĕҫе вĕҫтерет.

Вăхăт ҫук унăн канма,
Шав чупса ĕҫлет.
Пур ҫĕрте те тăрăшма
Пире вĕрентет.

Анне чунĕ – ҫепĕҫ чун,
Йăлтах каҫарать.
Вăй-хал епле ҫитет ун?
Пĕтĕмпех чăтать.

Анне ăсĕ – ҫивĕч ăс,
Вăл нумай пĕлет.
Ырă чун та пысăк ăс
Вăл пире пиллет.

Ах, упрасчĕ аннене,
Вăл пурри – телей.
«Турă патăр сывлăхне», –
Тет пĕрмай атте.

Аннерен ҫак ҫĕр ҫинче
Хакли ним те ҫук.
Пурăнтăр ҫут тĕнчере
Ман анне ҫĕр ҫул.

*Полина АНДРИАНОВА,*
*ЧППУ студентки.*

## Шурă лĕпĕшсем

Сывлăшра вĕҫеҫҫĕ
Шурă лĕпĕшсем,
Ҫĕр ҫине ӳкеҫҫĕ
Майĕпен вĕсем.

Ҫĕр питне сараҫҫĕ
Шурă катан пир.
Ачасем выляҫҫĕ
Юрпа кашни ир.



*Антон ИВАНОВ* (Канаш районĕ, Мăкăр шкулĕ) *ӳкерчĕкĕ.*

## Гороскоп паллисем

Пĕчĕк кăна упăте,
Тăрмашать вăл тĕпелте.
Хатĕрленĕ-ҫке тем те,
Паллă тăвать хăй ҫулне.

Илнĕ качака банан,
Сумкине ҫĕклет аран.
Мулкач йăтнă купăста,
Салат тума вăл ăста.

Автан тунă ҫăмарта –
Тем те пулать ку ҫулта.
Йĕке хӳре шăтăкран
Пăхкалать кăна кăн-кан.

Вăкăр пырать мĕкĕрсе,
Хăй килнине систерсе.
Тигр тăрать шăл йĕрсе,
«Уяв пулчĕ ман», – тесе.

Ҫĕлен ҫитрĕ хашлатса,
Хăй илемне кăтартса.
Тăпăртатать тур лаши…
Ăна мĕскер пулнă-ши?

Аҫтаха тата ăҫта?
Вăл та кирлĕччĕ кунта.
Сыснана кĕтме хавас.
Анчах мĕнпе хăналас?

Лартса патăм хашлама –
Кайран тухрĕ ташлама.
Эрех-сăра вăл ĕҫмест,
Пахча чавма ӳркенмест.

Йытăпа эсĕ туслаш,
Пулĕ саншăн чăн юлташ.
Упăте те начар мар,
Халь ăна хисеп тăвар.

Хăйĕн ҫулĕ ҫитнипе,
Юлташĕсем килнипе
Сиксе вылять упăте –
Кирлĕ мар ăна ним те.

Ĕҫрĕ, ҫирĕ савăнса,
Пур юлташне тав туса.
Качакана ыр сунса,
Упăтене пил парса.

*Валентина ХРИСТОФОРОВА.*
Вăрмар районĕ,
Тупах.

## Уяв умĕн

Мĕнлерех хитре хĕлле!
Пĕтĕм ял юр айĕнче!
Кулă, савăнăҫ питре.
Саламлатăп эп ире!

Юр Пике пепкесене
Саламлать теттесемпе.
Хĕл Мучи чăрăшсене
Шуратать хăй пасĕпе.

Ҫĕн ҫул ҫитрĕ! Хăй килсе
Ыталарĕ сиввипе.
Ҫемьесем килĕсенче
Уявлаҫҫĕ праҫнике.

*Диана КРАСНОВА.*
Красноармейски районĕ,
Пикшик шкулĕ.

## Тăван шкул

*(Хутар шкулĕ 145 ҫул тултарнă ятпа)*

Ҫавал тăрăх хăпаратпăр,
Ак умра илемлĕ ҫул:
Курăнса каять мăнаҫлăн
Ульянов уҫнă паллă шкул.

Эс ялан кĕтсе илетĕн
Пире ҫывăх тăванла,
Сăнупа илем кӳретĕн
Ирĕк, савнă Хутара.

Савăнатпăр, тĕлĕнетпĕр
Эсĕ хăвăрт ӳснинчен.
Сăвă-юрă кĕвĕлетпĕр
Ытарайми шкул ҫинчен.

Ăшшăн ăна саламлатпăр
Юбилей ҫитнĕ ятпа.
Ҫут пуласлăх ҫеҫ сунатпăр,
Мухтанатпăр, шкул, санпа!

## Килсе курăр уява!

Ирĕклĕ Хутар ытамĕнче
Ҫутă, хумлă Ҫавал хĕрринче
Ульянов уҫнă паллă шкул ларать,
Ҫирĕппĕн, хăюллăн малалла утать.
Килсе курăр уява,
Хапăл тăвăр йыхрава!

Ленин урамĕ ерипен
Шав куҫа илĕртет инҫетрен.
Юбилей ячĕпе хаклă шкул йыхăрать,
Ҫĕр ҫул та, пин ҫул пурнасса вăл шанать.
Килсе курăр уява,
Хапăл тăвăр йыхрава!

*В.СЕНАТОРОВ.*
Ҫĕмĕрле районĕ,
Хутар шкулĕ.

**Хĕрлĕ Чутай районĕнчи, Ҫĕнĕ Атикасси шкулĕнче вĕренекенсен пултарулăхĕ**



*Дима ГРИГОРЬЕВ* (Канаш районĕ, Мăкăр шкулĕ) *ӳкерчĕкĕ.*

* * *

Пĕрремĕш юрĕ ҫурĕ, ҫурĕ,
Таврана шап-шурă турĕ,
Ачасене савăнтарчĕ,
Самантрах хавхалантарчĕ:
Юр кĕлетке ăсталаҫҫĕ,
Хăйсем питĕ савăнаҫҫĕ.
Мулкачне те хатĕрлеҫҫĕ,
Хĕл Мучине пит кĕтеҫҫĕ.
Мĕнле лайăх-ҫке хĕлле
Юлташсемпеле пĕрле!

*Алевтина ЧУМАКОВА.*

* * *

Юр ҫăвать, юр ҫăвать,
Хĕллене вăл саламлать.
Ачасем чупса ҫӳреҫҫĕ,
Ҫунашка та сĕтĕреҫҫĕ.

*Леня ВАСИЛЬЕВ.*

* * *

Вĕлтĕртетрĕ шурă юр,
Ачасем те тухрĕҫ, кур.
Юрĕ ҫемҫе, кăпăшка –
Лайăх шăвĕ ҫунашка.

*Олеся КОРЧАКОВА.*

* * *

Ҫутă, сивĕ хĕл ҫитрĕ,
Тулта халĕ пит хитре.
Шурă юрĕ ҫунăран
Савăнатпăр кăмăлтан.

*Наташа ТИВЕРКИНА.*

* * *

Юр ҫусассăн хĕл ларать,
Ҫырма-ҫатра шуралать.
Пĕвесем те пăрланаҫҫĕ,
Ачасем унта васкаҫҫĕ.

*Алексей АЛЕКСЕЕВ.*

* * *

Юр ҫăвать, пĕрремĕш юр,
Урама тухса эс кур.
Ҫĕр ҫине ӳкет ачашшăн,
Хура ҫĕре шуратасшăн.

*Мария КАТЕЙКИНА.*

* * *

Сивĕ мар пире хĕлле,
Юр та питĕ ăшă.
Чир-чĕре хӳтермелле
Ярăнар пĕр хушă.

*Елена ЖУКОВА.*

* * *

Эпĕ тухрăм урама
Ҫунашкапа ярăнма.
Ҫунашки ман хыт шăвать –
Ача-пăча савăнать.
Хĕл те ҫитнĕн курăнчĕ –
Ҫутҫанталăк улшăнчĕ.
Сивĕ ҫилĕ хыт вĕрет,
Питĕ хытă чĕпĕтет.

*Света ШЕСТОПАЛОВА.*

**Калана сăмаха ҫирĕп тыт.**

● ИЛЕМ КĔТЕСĔ




**Чиперуксем, эсир килĕшӳллĕ тумтир тăхăнма çеç мар, ăна тĕрлĕ капăрлăхпа илемлетме те кăмăллатăр ахăртнех. Аксессуарсем пире илĕртӳллĕрех, хăйне евĕрлĕрех курăнма пулăшаççĕ. Анчах тепĕр чухне лавккара кăмăла кайнă хăлха çакки е мăй çыххи хамăр çинче килĕшӳсĕр пек туйăнать. Уйрăмах хăлха çакки суйланă чухне тимлĕ пулмалла.**

# Хăлха çакки суйлатпăр

Çак капăрлăх пит тĕсĕпе /тип лица/ килĕшӳллĕ курăнмалла. Пит тĕсне палăртас тесен тĕкĕр умне пырăр, çӳçе хыçалалла пуçтарăр, пит мĕнлерех геометри фигурипе танлашнине палăртăр.

Пит **тăрăхла çаврана** аса илтерет пулсан кирек мĕнле хăлха çакки те суйлама юрать. Уйрăмах çавраки аван курăнĕ. Ытла вăрăм тата çинçе капăрлăха вара туянма тăхтамалла.

**Тăрăхла, тăсланкăрах** питлисен тумлам евĕр, «пăта», черчен хăлха çакки суйласан аван. Пысăкрах, темиçе пайран тăракан капăрлăх та çак пит тĕсĕпе килĕшӳллĕ пулать. Лапчăккине, вăрăммине вара пачах та тăхăнмалла мар.

**Çаврака** питлĕ чиперуксен çинçе, вăрăмрах, пысăкрах калăпăшлă хăлха çаккине тимлемелле. Çавăн пекех тумлам, тӳркĕтеслĕх, тăваткал, виçкĕтеслĕх евĕррисене, тăрăхлине суйласан та йăнăшмăр. Çаврака, «гвоздик», йывăр курăнакан капăрлăха айккине илсе хурăр.

**Тăваткал** питлисем çинче вăрăм тумлам евĕр тата пысăк, янах шăмми таран усăнакан хăлха çакки аван курăнĕ. Ку пите кăшт çавракалатма пулăшать. Авăнчăклă, тикĕс мар эрешлĕ хăлха çакки пит контурне тикĕсрех кăтартĕ. Темиçе сийлĕ вăчăра евĕр капăрлăх та кунта вырăнлă.

Хăлха çакки суйланă чухне çӳç тĕсне те тимлемелле. Вĕсенче пысăк уйрăмлăх пулмалла. Сăмахран, хура çӳçлĕ чиперуксене çутă, куçа тӳрех тăрăнакан тĕслĕ хăлха çакки тата илĕртӳллĕрех кăтартать.

Хăлха çакки ӳт тĕсĕпе пĕр килмелле. «Ăшă», хăмăртарах, тĕттĕм ӳтлисем çинче ылтăн е бронза тĕсли илемлĕ курăнĕ. Кĕмĕл, платина, мельхиор тĕсĕ вара çутă ӳтпе килĕшӳллĕ пулать.

Асăннă аксессуара куç тĕсне пăхса суйласан аван. Çутă çӳçлĕ, çутă куçлă пикесен илемлĕхĕпе черченлĕхе йăлтăртатакан, çутă хăлха çакки палăртĕ. Тĕттĕм куçсемпе вара ытларах хăмăртараххисем, сарăраххисем килĕшсе тăраççĕ.

Симĕс-пăхăр тĕслĕ куçсене илемлĕрех те çутăрах кăтартма малахитпа, агатпа, бирюзапа, бериллапа, гранатпа капăрлатнă хăлха çакки пулăшĕ. Симĕс куçсенче сарă пăнчăсем нумайрах пулсан хризолит тĕсĕн сĕмĕсене суйлăр.

Бирюза, лазурит, хура агат чулĕпе капăрлатнă аксессуар тӳпе евĕр кăвак куçсене палăртĕ. Çавăн пекех çутăрах хĕрлĕ-сарă, ылтăн тĕслĕ, кăвак, хура кăвак, хĕрлĕ-кăвак тĕслĕ чулсем те килĕшӳллĕ пулĕç.

Хăмăр куçлă пикесене рубин, гранат, топаз, коралл, аметистпа капăрлатнă хăлха çакки суйлама сĕнеççĕ стилистсем. Куç тĕсĕнчен палăрмаллах уйрăлса тăракан чулсемпе, сăмахран, ту хрусталĕпе, ĕнчĕпе, янтарьпе капăрлатни те аван.

Йăлтăртатакан, хĕмленсе çиçекен куçсене вара çуталса тăракан чулпа, бриллиантпа е ту хрусталĕпе капăрлатнă хăлха çакки тăхăнса палăртма пулать.

# Чĕрнене илемлетер-и?



Пĕр-пĕр уява е мероприятие пуçтарăннă чухне чĕрнене тирпейлеме манмалла мар. Килте те илем салонĕнчи пекех хитре маникюр тума май пур. Ăна валли хăвăра килĕшекен лак, ятарлă трафаретсем кирлĕ.

Чĕрнене лакпа сăрлăр та типиччен тытăр. Трафаретсене çыпăçтарăр. Унтан урăх тĕслĕ лакпа витĕр. Лайăх типнĕ хыççăн трафарета типтерлĕн хăйпăтăр та эреше витĕр курăнакан лакпа сăрласа çирĕплетĕр. Кун йышши ӳкерчĕксене декоративлă япаласемпе те капăрлатма юрать. Илемлĕ маникюр хатĕр.

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## «Юр кĕлетке» салат

**Ăна валли маринадланă 4 хăяр, çур килограмм шăмминчен уйăрнă чăх какайĕ, 2 çĕрулми, 250 грамм маринадланă кăмпа, 3 çăмарта, майонез, Юр кĕлеткен хăш-пĕр пайне тума пĕçернĕ е чĕрĕ кишĕр тата олива кирлĕ.**

Пĕçернĕ çĕрулмине, хăяра, çăмарта саррипе шуррине уйăммăн теркăпа хырмалла. Кăмпапа, какая вĕтĕ турамалла. Çăмарта шуррине вĕтĕ терка витĕр кăлармалла. Çимĕçсене ăшăх турилккене çаврашка пек сийĕн-сийĕн çак йĕркепе хумалла: çĕрулми, кăмпа, чăх какайĕ, хăяр, çăмарта сарри. Пур сие те майонезпа сĕрмелле. Çиеле çăмарта шуррине сапса кăшт пусармалла. Хыççăн кишĕртен Юр кĕлеткен сăмсине, çăварне, пит çăмартине касса хумалла. Куçĕсене оливкăран ăсталамалла. Хатĕр салата сивĕтмĕше лартса пĕр-икĕ сехет тытмалла.

● ĂСТА АЛĂСЕМ

# Хĕл Мучи



Кĕçех юратнă уяв, Çĕнĕ çул, çитет. Эсир шкулти пӳлĕмсемпе кил-çурта гирляндăпа, йăлтăркка мишурапа тахçанах илемлетрĕр пулĕ-ха? Теттесемпе капăрлатнă чăрăш та лартрăр ахăртнех. Ăна хамăр алăпа ăсталанă теттепе те илемлетер мар-и? Сире Çĕнĕ çулăн тĕп хăнине, Хĕл Мучине, оригами мелĕпе туса пăхма сĕнетпĕр. Ăна валли тăваткал хут листипе ручка çеç кирлĕ. Хут листин пĕр енĕ – хĕрлĕ, тепĕр енĕ шурă тĕслĕ пулмалла. Хĕл Мучине ӳкерчĕкре кăтартнă схемăпа ăсталăр. Пит-куçне ручкăпа ӳкерĕр.

● УЯВ УМĔН

# Çĕнĕ çула – çĕнĕ тумтирпе



Эсир Çĕнĕ çула çĕнĕ тумтирпе кĕтсе илме хатĕр-и? Уяв каçĕнче тăхăнмалли тум туяннă чухне çак сĕнӳсене шута илĕр.

2016 çул – Упăте çулталăкĕ. Ку чĕрчун çаврăнăçуллă, шухă, ырă кăмăллă, çул пама хатĕр пулнине эпир пурте пĕлетпĕр. Кичемлĕхе çеç чăтма пултараймасть вăл. Çавăнпа та Çĕнĕ çула кĕтсе илмелли тумтир кăмăла çĕклетĕр, меллĕ пултăр. Ку уяв каçĕнче чун каниччен савăнма та чăрмантармĕ.

Упăтене çутă тĕссем, хăйне евĕрлĕх, йăлтăркка япаласем илĕртеççĕ. Çавăнпа тумтире те çакна шута илсе суйлăр. Çулталăк палли – Вутлă Упăте. Уяв кĕпи те çулăм тĕслĕ пулсан аван. Хĕрлĕ тĕсĕн пур сĕмне те, хăвăра килĕшет пулсан, туянма пултаратăр. Çулăмра тата мĕнле тĕссем пур-ха? Хĕрлĕ, сарă, кăвак, симĕс, хĕрлĕ-сарă… Кăвар, кĕл тĕсĕ, хĕрлĕ-хăмăр, хăмăр-сарă, ылтăн, ӳт тĕслĕ кĕпе – пĕтĕмпех Çĕнĕ çул каçĕнче тăхăнма юрăхлă.

Çавăн пекех Упăте пурăнакан тавралăх тĕсĕ те тумтирте сăнарлансан аван. Унта тропикри кайăксен, джунгли тата унти чечексен тĕсĕсем кĕреççĕ. Сарă, симĕс, кăвак, кĕрен – пур тĕсе хутăштарнă тум шăп уяв каçĕ валли. Ăна йăлтăрккасемпе илемлетни те Çĕнĕ çул хуçин кăмăлне тивĕçтерĕ.

*Страницăна Нина ЦАРЫГИНА (56-11-80) хатĕрленĕ.*

# Хаваслă 2015 самант

## Сăмахкаçмăш



**Сылтăмалла:** 3. Сурăх савнийĕ. 5. ...-сухра. 6. Авалхи грексен кĕвĕ инструменчĕ. 7. Пулă тытмалли хатĕр. 10. Стройкăри «чарлан». 11. Ĕне хырăмне пăсман апат. 15. Вĕçен кайăк. 16. Тапăну. 17. Савăт-сапа. 18. Вăрман патши. 19. Кăнтăрти Анна аппа хули. 20. Панулми сорчĕ. 22. Бурят хресченĕ. 23. Бугульма юрăçи, хĕрарăм. 25. Хура мар. 27. Ăна артист калăплать. 28. Кĕрĕк «тăшманĕ». 29. Платникĕн ĕç хатĕрĕ. 30. Музыка терминĕ.

**Аялалла:** 1. Чиркÿллĕ ял. 2. Пирĕн ... анаталла /юрăран/. 4. Авалхи скифсен хĕçĕ. 8. Вăл пилĕк авсан тухать. 9. Çурхи ĕçси. 11. Пичче мар. 12. А.Чеховăн вăл 6-мĕш номерлĕ пулнă. 13. Батут çинче сикессипе темиçе хут та тĕнче чемпионĕ пулнăскер. 14. Буржуйăн апачĕ. 17. Физкультура мар. 20. Алма–... /хула/. 21. Игрек тăванĕ. 24. Кăнтăрти йывăç. 25. Хурткăпшанкă. 26. Пушкăрт халăхĕн паттăрĕ – ... Юлаев.

## Çÿлелле тем пек ÿссен те, çитейместĕн тÿпене...



**Сылтăмалла:** 2. Шахмат вăййинчи çĕнтерÿ. 4. Çурхи вĕçен кайăк. 7. Шăвармалли витре. 8. Унта турист çĕр каçать. 12. Теннисистăн ĕç хатĕрĕ. 13. Сăвăри пусăм палли. 14. Шăна, ÿпре, ... 15. Чăваш халăх çыравçи. 16. ... Мария. 17. Тахçан вăл Олимпиадăпа танлашнă. 23. Каçал тăрăхĕнчи ял. 25. Сцена пайĕ. 26. Компос кăтартăвĕ. 28. Вăл стена çинче çакăнса тăрать. 29. «Дерсу ...».

**Аялалла:** 1. Пĕвери «юрăç». 2. Ăна Герасим шыва путарнă. 3. Вăл шакла пуça кирлĕ мар. 4. Çĕлен-... 5. Хăмаран çÿхерех. 6. Физика терминĕ. 8. Кĕвĕ хайлавĕ. 9. Радар тăванĕ. 10. Панулми сорчĕ. 11. Театрти «сĕтел». 18. Çĕршывăн тăваттăмĕш влаçĕ. 19. Халăхсен хушшинчи уйрăмлăх. 20. Ахматова та, Каренина та. 21. Композитор – ... Кальман. 22. Çар пайĕ. 23. Пĕчĕк мучи мунча тăвать /туп.юм./. 24. Вăл кантăка касать. 25. Тинĕсри фонтан. 27. Сирпĕтмелли хатĕр.

## Куçма пĕлсен эс лашапа, паллах вылятăн шахмăтла



**Сылтăмалла:** 2. Физика терминĕ. 4. Киев патшалăхĕн авалхи пуçлăхĕ. 6. Кăнтăрти Анна аппа хули. 8. Маугли амăшĕ пулнăскер. 11. Пушкăртстанри хула. 13. Тури чăвашсен «ашшĕ» /диал./. 14. Çурхи ĕçси. 16. Купăс. 18. Чиркÿллĕ ял. 19. Авалхи хĕвел ячĕ. 20. Компьютер пайĕ. 23. Ĕçри «картлашка». 24. Етĕрне районĕнчи ял. 25. Лама еврĕлĕ чĕрчун. 26. «Доктор Живаго» кĕнеке авторĕ. 31. Р.Сарпи хайлавĕ.

**Аялалла:** 1. Атолл юлташĕ. 3. Арçын ячĕ. 4. Вĕçев аппарачĕ. 5. «Хура акула» вертолетăн кĕске ячĕ. 7. «Недоросль» хайлаври сăнар. 8. Алма–... 9. Типсе ларнă шыв юппи /вырăсла/. 10. Тахçанхи мафиози кланĕн пуçлăхĕ. 12. Вĕшле йытă. 14. Ăста вĕçевçĕ. 15. Савăт-сапа. 17. Канадăри чапа тухнă хоккеист. 20. Ют çĕршыв физикĕ. 21. Раççей актерĕ. 22. Пĕрремĕш хĕрарăм космонавт. 24. Винни Пухăн тусĕ. 26. Шахмат вăййинчи никам çĕнтереймен «пулăм». 27. Атăл юппи. 28. Çĕр çинчи пĕрремĕш хĕрарăм. 29. Компьютерти ят. 30. Ăна Герда çăлса хăварнă.

## Куç хăрать те алă тăвать



1. Кил ăшши. 2. Кăнтăрти хула. 3. Аквариумри пулă. 4. Хĕç-пăшал. 5. Яппунсен сăвă виçи. 6. Карапсен пысăк ушкăнĕ. 7. Казаксен пуçлăхĕ. 8. Белоруссири юхан шыв. 9. Пистолет. 10. Вырăс юрăçи, бард. 11. Пысăк калта. 12. Испани хĕçĕ. 13. Авалхи скифсен хĕçĕ. 14. ...-... кăвакарчăн. 15. Инди актерĕ – Радж ... 16. Уйăх еврĕ булка. 17. Спортсменсен призĕ. 18. Хаклă йышши чул виçи. 19. Самолет пусми. 20. Пĕр-пĕр япалана планлани. 21. ... Бульба та, Шевченко та. 22. Çăмăл апат. 23. Ăна айсберг путарнă. 24. Кофе тăванĕ. 25. Ÿссе çитеймен жираф. 26. АПШри штат. 27. Тахçан вăл пионерсен курорчĕ пулнă. 28. Ăна кахал чи малтан ярса тытать. 29. Венесуэлăн тĕп хули. 30. Ырă суннă сăмах. 31. Конверт çинчи «ÿкерчĕк». 32. Кутăн выльăх.

*Николай КРАСНОВ* (Йĕпреç районĕ) *хатĕрленĕ.*